# Пурнӑҫне тӑван чӗлхене халалланӑ

Леонид Павлович Сергеев – Шупашкарти педагогика университечӗн профессорӗ, филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ, Раҫҫей Федерацийӗн (2002) тата Чӑваш Республикин наукӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ (1990), К.В. Иванов ячӗллӗ Патшалӑх премийӗн лауреачӗ (1992), Наци академийӗн Н.И. Ашмарин ячӗллӗ премийӗн лауреачӗ (2002).

Эпӗ ӑна самаях пӗлетӗп ӗнтӗ,



анчах тӗлӗнме пӑрахмастӑп: ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ енӗпе уҫӑлса пырать ӗҫтешӗмӗр. Ҫакна кӑна ҫирӗплетсех калама пултаратӑп: чӑнчӑн Чӑваш вӑл! Ҫав тери ӗҫчен, шутсӑр пултаруллӑ, питӗ сӑпайлӑ.

Вӑл 1929 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн виҫҫӗмӗшӗнче Муркаш районӗнчи Ҫурлатри ялӗнче ҫуралнӑ. Ашшӗ – Чӑваш АССР тава тивӗҫлӗ учителӗ П.С. Сергеев – ялти пуҫламӑш шкула ертсе пынӑ. Павел Сергеевич пулас чӗлхеҫӗн пӗрремӗш вӗрентекенӗ тата иккӗмӗш класс кӗнекин авторӗ (Т. Малышевпа пӗрле хатӗрленӗ) пулнӑ.

Ашшӗ витӗмӗпе ӳссе ҫитӗннӗ ача педагогика институтне вӗренме кӗнӗ. Аслӑрах курсра куҫӑн мар уйрӑма куҫнӑ та Муркаш районӗнчи Тойкилтӗ шкулне вырнаҫнӑ. Сакӑр ҫул ытла ӗҫленӗ унта: учитель, завуч, шкул директорӗ. Вӑл ачасене тӑван чӗлхене туйма, чӑваш сӑмахне хаклама хӑнӑхтарнӑ. Литература кружокӗ йӗркеленӗ, ачасемпе пӗрле "Малтанхи утӑмсем" журнал кӑларма пуҫланӑ. Унта сӑвӑ-калав ҫеҫ мар, илемлӗ сӑн ӳкерчӗксем те вырӑн тупнӑ. Кун йышши пултарулӑха вӗсене Леонид Павлович хӑех фотокружокра хӑнӑхтарнӑ.

Иртнӗ ӗмӗрӗн аллӑмӗшпе утмӑлмӗш ҫулӗсен чиккинче Л.П. Сергеев Муркаш районӗн ҫутӗҫ пайне ертсе пынӑ, райцентрти интернат-шкула йӗркеленӗ, унӑн малтанхи директорӗ пулнӑ. Каярах ӑста педагога тата пултаруллӑ йӗркелӳҫе "СССР ҫутӗҫ отличникӗ" паллӑпа чысласҫӗ.

Леонид Павлович шкулта ӗҫленӗ ҫулсенчех тӗпчев институчӗсемпе ҫыхӑну тытнӑ, диалектологи экспедицийӗсене хутшӑннӑ, "Муркаш калаҫӑвӗн тӗп уйрӑмлӑхӗсем" тӗпчев ӗҫӗ пичетлесе кӑларнӑ. 1961 ҫулта вӑл аспирантурӑра вӗренме пуҫлать, С.П. Горский ертсе пынипе Вӑрмар калаҫӑвне тӗпчесе диссертаци хатӗрлет. СССР Ӑслӑлӑх академийӗн Чӗлхе институчӗн ятарлӑ канашӗ ӑна ҫак ӗҫшӗн филологи наукисен кандидачӗн степеньне пама йышӑннӑ.

Леонид Павлович пӗр тапхӑр ЧАССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи ӑслӑлӑх тӗпчевӗсен институтӗнче (халӗ Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗ) вӑй хунӑ: чӗлхемӗрӗн ӗмӗртен ӗмӗре пухӑнса пынӑ пуянлӑхне тишкернӗ, ӑна тӗнче умне кӑларассишӗн тимленӗ. Тӗнчипе паллӑ филолог В.М. Жирмунский сӗннипе пирӗн тӗрленчӗк геройӗ тӗрлӗ тӑрӑхри чӑвашсен чӗлхе уйрӑмлӑхӗсене карттӑ ҫине ӳкерсе кӑтартма пуҫлать. Вӑл хатӗрленӗ диалектологи атласӗн малтанхи варианчӗсенех ытти тӗрӗк чӗлхисен тӗпчевҫисем кӑсӑкланса та ырласа кӗтсе илеҫҫӗ.

Хӑй ӗмӗрӗн 3 ҫулне Л.П. Сергеев командировкӑсемпе экспедицисенче – диалектологи материалне пухса – ирттерсе янӑ. Тутар, Пушкӑрт, Ӑрӑмпур, Сарӑту, Чӗмпӗр тӑрӑхӗнчи тата ытти ҫӗрти чӑвашсем патне ҫитнӗ. Пухӑннӑ материала тишкерсе, пӗтӗҫтерсе вӑл алла яхӑн статья, икӗ брошюра, "Чӑваш чӗлхин диалектологи словарьне", виҫӗ томлӑ "Чӑваш диалектологи атласне" (448 карттӑ) хатӗрленӗ. Ку ҫеҫ те мар-ха: "СССР тӗрӗк чӗлхисен диалектологи атласӗн" тата "Европӑн лингвистика атласӗн" чӑваш пайӗсене хатӗрлесси те Леонид Павловичӑн тивӗҫӗ пулнӑ. 1973 ҫулта вӑл "Чӑваш чӗлхин диалект системи (Диалектологи атласӗ)" темӑпа доктор диссертацине ӑнӑҫлӑ хӳтӗленӗ. Пирӗн ентешӗн ӗҫне ытти чӗлхесен тӗпчевҫисем А.Н. Кононовпа М.Ш. Ширалиев академиксем, Ш.Ш. Сарыбаев профессор, филологи наукисен докторӗсем Ф.А. Абдуллаевпа Р.Я. Удлер т. ыт. те пысӑка хурса хакланӑ. Сӑмахран, Ф. Зейналовпа Т. Гаджиев профессорсем Леонид Павловичӑн "Чӑваш чӗлхин атласӗ" пирки ҫапла ҫырнӑ: "Хӑш-пӗр тӗрӗк халӑхӗсен тӗпчевҫисем ушкӑнпа тӑвайман ӗҫе вӑл пӗччен тума пултарчӗ... Атласа пичетлесе кӑларни чӑваш чӗлхе ӑслӑлӑхӗшӗн ҫеҫ мар, тӗрӗк чӗлхисене тӗпчекенсемшӗн те калама ҫук усаллӑ пулӗ. Унтанпа вӑтӑр ҫул та ҫитет ӗнтӗ, Л.П. Сергеев хатӗрленӗ диалектологи атласӗсене ҫаплах кӗнеке туса кӑлараймарӗҫ-ха. Вӗсем Чӑваш патшалӑх гуманитари институчӗн наука архивӗнче ал ҫыру хальлӗн упранаҫҫӗ.

Леонид Павлович 1970-1972 ҫулсенче ЧАССР Министрсен Совечӗ ҫумӗнчи Ӑслӑлӑх тӗпчевӗсен институчӗн чӗлхе пайне, 1972-1984-мӗшсенче РСФСР Ҫутӗҫ министерствин Наци шкулӗсен институчӗн Шупашкарти лабораторине ертсе пынӑ. 1984-1991 ҫулсенче педагогика институчӗн пуҫламӑш вӗрентӳ кафедрин тата чӑвашпа вырӑс чӗлхисен кафедрин пуҫлӑхӗ пулнӑ. Халӗ - педуниверситетӑн чӑваш чӗлхи кафедрин профессорӗ.

"Кашни ача – поэт, вӗрентекенӗн ӑна пултарулӑх тӗнчине ертсе кӗме пӗлмелле" - Сухомлинскин ҫак шухӑшӗ Л.П. Сергеевӑн вӗрентӳ ӑслайне питӗ ҫывӑх. Ачасене поэт чунлӑ ҫын ҫеҫ лайӑх ӑнлантарма пултарать. Леонид Павлович чӗлхе пирки ачасене майлӑ – кӑсӑклӑ та килӗшӳллӗ - ҫырма пӗлет. Ача садӗнче те, шкулта та, университетра та ҫамрӑк ӑру Л.П. Сергеев кӗнекисем пулӑшнипе пӗлӳ илет. Кӗҫӗннисем валли – «Ӳкерчӗклӗ азбукӑпа" "Чӑваш букварӗ", аслӑраххисемшӗн – "Чӑваш сӑмахӗпе" "Сӑмах тӗнчи", тӗрлӗ учебниксемпе словарьсем, университетра вӗренме вара - "Чувашский язык" (Г.В. Лукояновпа пӗрле хатӗрленӗ), "Чӑваш чӗлхи" (В.И. Котлеевпа пӗрле) учебниксем тата теҫеткене яхӑн пулӑшу кӗнеки.

Аслӑ юлташӑмӑр пултарулӑхӗн тепӗр сумлӑ енӗ – лексикографи. Вӑл хӑй пӗччен е ӗҫтешӗсемпе пӗрле вунӑ ытла словарь ӑсталарӗ. Авторсен йышӗпе кӑларнисем: "Вырӑсла-чӑвашла словарь" (1971), "Чӑваш чӗлхин тӳнтер словарӗ" (1985). Леонид Павловичӑн орфографи словарӗсем те, фразеологи словарӗ те, "Синонимсемпе антонимсен кӗске словарӗ" те пур. М.Г. Даниловӑпа пӗрле вӑл "Чӗлхе терминӗсен ӑнлантаруллӑ словарьне", Е.Ф. Васильевӑпа пӗрле "Вырӑсла-чӑвашла тематика словарьне" тата "Омонимсен словарьне" вулакансем патне ҫитерчӗ.

Л.П. Сергеев профессор – канӑҫсӑр чунлӑ ҫын, ыттисене те вут хурсах тӑрать: мӑранлӑха сирме, хастартарах пулма пулӑшать. Учительсемпе тӗл пулма ертсе тухса каять, ушкӑнпа тумалли тӗпчевсене явӑҫтарать. Вӑл хавхалантарса пынипе ҫамрӑксем умлӑ-хыҫлӑ диссертаци хӳтӗлеҫҫӗ...

Малашне те ӑнӑҫлӑ ӗҫлесе пыма сывлӑхӑр ҫирӗп пултӑр та кунҫулӑр вӑрӑм пултӑр, хисеплӗ ӗҫтешӗмӗр!

**Г. ДЕГТЯРЕВ,**
**филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗ.**